Трупинӑ М.

# Ӗҫ тухмарӗ



33-235

Чӑвашиздат
1933 Шупашкар

1642

Трупина Мархви

# Ĕç тухмарĕ

Калав

Чăвашсен Патшалăх Истаттĕлстви
Шупашкар 1933

Отпечатано в типографии № 1
Чувашгиза г. Чебоксары,
Канашская, 16.

# I

— Есĕ, амĕш, ман çинҫен ырă маррине ан шухăшла. Епĕ кăшт çеç сыпнă. Ыраннă çинҫен Кавĕрлепе пĕр-ик ҫерке йатăмăр... ан çилен...

Çапла калаçкаласа, ӳсĕрпе сулкаланса, тăрат Хветут алкум вĕçĕнҫе. Ҫĕлхи-çăварĕ калаçнă ҫух çыхланат. Урисем хуçкаланаççĕ. Хветут хаљ йăванса кайас çинҫе тăрат, хăй çапах арăмне:

— Ҫăн та ĕçмен, кăшт çеç сыпнă. Вăт уйăх пур, хĕвел пур, нумай ĕçмен, ӳсĕр мар,—тесе, аллисемпе кăнтаркаласа, уçнă алăкран кĕмесĕр тăрат.

Арăмĕ, упăшкине уçса кӳртме тухнăскер, упăшки ӳсĕр килнĕшĕн пит кăмăлсăрланса, çатăртатса йатлаçма тытăнасшăн тăрат. Ӳсĕр упăшкана витерӳллĕ, хайаррăн йатласшăн.

Кĕçĕр вăхăт ҫылай пулнă пулмалла. Уйăх та ав, çур çăкăр пекскер, кай йенелле кайнă, карташне лупас урлă пăхса

çутататтă. Йалта автансем шартлаттарса авăтаççĕ... Кĕрхи сивĕ ир çывхарать.

— Аçта çӳрерĕн есĕ пайан ку таранҫен? терĕ арăмĕ, сассине хайартарах кăларма тăрăшса.

— Аçта,—тет... йăвашшăн, айăплă сассипе Хветут. Хăй хышанкаласа, тайкаланса тăрать.

— Ах, терт! Аçта кӳпрĕн?! Мĕншĕн?

— Арман урапи йусарăмăрçке-ха пайан. Кавĕрлепе ĕçлерĕмĕр. Еç пĕтернĕ çинҫен пĕр-ик ҫерке сыпрăмăр.

— Кам патĕнҫе?! Аçта ĕçрĕр?! пыр шăтăкне ыраттарса тухакан сассипе хирет Мариç.

— Кам патĕнҫипе мĕн тăватăн есĕ? Ĕçнĕ, пулнă, иртнĕ, кайнă... Ан шарла, ан йатлаç ĕнтĕ Мариç. Епĕ хамăнне пĕр пус та ĕçсе пĕтермен, хуть укçана шутласа пăх..., тет йăпăлтатса, арăмне ыталаса илесшĕн пек аллисене кăнтарса.

— Ара кам укçипе кӳпрĕр пулĕ çак тери?!

— Тупнă епĕ, тупнă, тупрăм та... ех... пуçне сулкаласа илҫĕ Хветут, аллипе сĕлтрĕ.

— Ах! путсĕр! Укçасăр тет! Укçасăр сана ђипере кура ĕçтереççĕ-и мĕн? Есрел пек илемсĕрскер! Мĕн пур укçуна кӳпсе йатăн пулĕ-ха! Кӳр кунга укçа кӳшелккине!

Мариç упăшкине çаннинђен-мĕнтен кăнтти-кантти турткаларĕ.

Хветут, тĕрексĕр урисемпе тин утма вĕренекен ађа пек тармакланса тăрса, кĕсйи ăшне аллине ђиксе йађĕ. Кăсйи калама çук тарăн пек, аллине тайăлсах ђикрĕ те, ђылайђђен кĕсйинђе пулхатса тăрса укçа кӳшелккине хуллен кăларса арăмне тыттарђĕ.

— М-ме, каснађђей! Ыйхă килет манăн. Ађасем хушшинелле, ăшă çĕре кĕрсе выртам, терĕ Хветут. Сулкаланса, тайкаланса алкум картлашки çине хăпарђĕ.

— Ађасем патне ан вырт! Ӳсĕрпе вĕсене вăратса пĕтерĕн! Хăпарса вырт кăмака çине, ӳсĕр сурăх! терĕ Мариç. Ура çинђе тăнкăл-танкăл тăракан упăшкине пӳртелле тĕртсе, сулса йађĕ те, хăй те ун хыççăн пӳрте кĕђĕ.

— Йурăт мана кăмака çинђе те, унта пушшех лайăх, текелесе Хветут пӳрте кĕрсенех кăмака çине хăпаркаласа вырнаçрĕ.

Мариç упăшки кĕрсе выртнă выртманах краççын çутса укçа кӳшелккине салтса пăхрĕ. Кӳшелккере укçа каçхине 42 тенкĕ те 17 пусђĕ. Мариç укçана каçхине копператтивран супăђ илсе килнĕ ђухне суса пăхнăђђĕ. Халĕ те укçа çав çавах, пĕр пус та катăлман. Мĕнле йапала ку? шухăшлаŤ Мариç. Хветут хăй пит ӳсĕр, Кавĕрлене ĕçтертĕм тет, укçи çаплипех, катăлман. Ђăнахах калаŤ мĕн, хамăнне ĕçмен тесе. Ăçтан тупнăши вĕсем укçа? Мĕнле майпа ĕçнĕши? Ара арманти çăнăха сутса ĕçнĕ пулĕçке кусем? —тесе хыпăнса ӳкрĕ Мариç. Çак шухăш Мариçе хытă ђăрмантарма тытăнђĕ. Хветут кăсйари укçине пĕтĕмпе ĕçсе йанă пулсан Мариç ытлах, çавăн ђухлех куђђанса хыпăнса ӳкмен пулĕђђĕ. Арманти çăнăха сутса ĕçнĕ пулĕ тенĕ шухăш Мариçе пит хăратса пăрахрĕ, хуйха ӳкерђĕ.

— Ай-йай! Тем курса ларас пулĕ Хветут ĕçме тытăнсан. Пĕр ĕçме пуçарса йарсан ĕнтĕ вăл ђас ђарăнас çук. Арманти çăнăха текех сутса ĕçĕ. Мĕн пулĕ вара капла? Ай, ăш хыппи! Вăрра тухса кайаŤçке вара пирĕн Хветут! Колхос

пурлăхне салатаканни, колхосăнне ĕçсе-кӳпсе пурăнаканни! Ах, ан пултăр ун пек Хветут. Ан вăрлатăр колхосăнне! Тем курса ларас пулĕ.

Çак шухăшсем Мариç ăшђиккине çунтарма тапратрĕç. Çывăрас тесе ађисем çумне пырса выртрĕ вăл, ыйхă та вĕçсе кайнă. Шурăмпуç çутти палăриђђенех Мариç пĕр куç хупмасăр выртрĕ. Урам йенђи кантăксенђен пӳрте хĕрлĕ çутă ӳксен, Мариç сиксе тăрса армана тухса кайрĕ.

Мариç упăшки Хветут, колхос арманĕ саветушђинђе тăраканскер, ку йахăнта нихçан та ерехпе аппаланса çӳрекен марђ-ђĕ. Хветут ерехе ӳсĕрлеђђен ĕçменни 3—4 çул та пур ĕнтĕ.

— Шанђăклă çын Хветут. Арман йĕр-кине пĕлет, ĕлĕк арман хуçи патĕнђе мелникре пурăннă, кӳртес Хветута арман саветушђине, терĕç колхоçнĕксем пĕр пухура. Хветута арман саветушђийĕ туса та хуђĕç. Икĕ çул ĕнтĕ Хветут арманта аван йĕрке туса, тĕрĕс ĕçлесе пурăнаť. Халђхи вăхăтра колхоса арман тупăш аван параť. Кăçал Хветут арман ĕçне

тата вăйлатрĕ: халиђђен, хуçа ђух икĕ ђул кăна авăрагђĕç, халĕ виççĕ. Тата кĕрпе арманĕ, çăм тапакан машшин майлаштарса йарасшăн-ха колхос. Хветут çак ĕçсене пĕтĕм вăйне хурса, арман колхосшăн тупăшлăрах пултăр тесе тăрăшса ĕçлет. Арман тупăшĕпе колхос йалта електритсă çутатса йарасшăн. План тăрăх колхос пуçланса кайни виçĕ çул тулнă çĕре електритсă пулмалла: кашни пўртре Илйиђ лампи пуласссине Хветут та, Мариç те, пур колхоçнĕксем те кĕтсе тăраççĕ.

Хветут, ĕлĕк арманта хуçа патĕнђе тарçăра пурăннă ђух, тарăхнипе пуљ, ерех ĕçкелетђĕ, ўсĕрпе Мариçне те çапкалаťђĕ, анђах халĕ, революутси пулнăранпа ĕçсех каймасť. Тем тĕлте ĕçкелет те, ўсĕрлеђђен ĕçмест. Ĕлĕкхи пек ерни ернипе ĕçмест. Ĕçсен те Мариçне тивмест. Мариç вĕт вăл активлă телекаткă, колхосра ђăн хастарлă утарнитсă. Çĕкленмест Хветутăн алли Мариçе çапма. Пĕрре, ђылай пулаť ĕнтĕ, Хветут Мариçе ўсĕрпе ђышса йанă. Мариç Хветута çавăншăн йалканашне илсе кайса Хветут питне-

кусне хытă пĕсертнĕ. Савăнганпа ĕнтĕ Хветут арăмне ӳсĕрĕлсен те пĕр сивĕ сăмах та каламасť, пӳрнепе те тĕртместь.

Мариç армана ђупса кайнă пекех васкаса кайрĕ. Арман йал вĕçĕнђе, инçех мар, çутă пĕверен кунтарах ларать. Арман хытă авăрнипе, арман таврашĕнђе прахут ђашкăрнă пек илтĕнет. Кĕре майлă халь шыв аван тулнă, арман вăйлă авăрать. Арман авăртакансем те нумай. Карташ тулли йутран килнĕ тырăллă лавсем тăраççĕ. Кĕреçе çăнăхĕ талăкне 20—25 пăт пухăнать. Çакнашкал арман аван авăрнă ђух Хветут пĕр пăт çăнăх мар, ытларах илсен те палли килес çук, анђах Хветут никçан та армантан çăнăх вăрттăн çĕклесе усă курман. Мĕн ђухлĕ тырă авăрнине тĕрĕс çырса пырса, кĕреçе çăнăхне тĕрĕс, пĕр кĕренке пытармасăр правленине парса пынă. Хветут хăй те, Мариç те тӳрĕ, йамăта хапсăнман çынсем пулнă. Мариç Хветут арманта аван йĕрке туса пурăннăшăн пит кăмăллă пулнă. Хăй ăшĕнђе вăл Хветута тӳрĕ, йĕркеллĕ çын пулнăшăн йуратса пурăннă, анђах Мариç кăмăлне пĕр йапала пăснă: темиçе çул хушшинђе

Хветут ĕçкелеме тытăнатех çав. Хветут ĕçме тытăнасран Мариç пит хăраť, ĕçесрен сыхлаť, ĕçсен хытă йатлаçаť.

Арманта Мариç унта-кунта пăхкаласа çӳрерĕ, Урťума шыраса тупрĕ. Урťум 17--18 çулхи ађа, ђĕлхесĕртерехскер, Хветута арманта пулăшса, ĕçлесе тăраканни. Мариç арман кĕлетне пырса кĕнĕ ђух, Урťум кĕлетре михĕсем хушшинђе, михĕсене вырнаçтарса кĕрмешет. Мариç Урťума кăђăк туртса карташнелле ђĕнсе тухрĕ.

—Урťум, Хветут пиђђу ĕнер мĕн вăхăтра армантан тухса кайрĕ, терĕ Мариç Урťума сăмахпа та хыттăн кăшкăрса, аллисемпе те туса кăтартса.

—У-ур-рап-па..., терĕ Урťум, аллисемпе туса пĕтернине кăтартрĕ.

— Урапа туса пĕтерсен кайрĕ-и?

— Ăхă-ăхă, терĕ Урťум, пуçне тайа-тайа илђĕ.

— Урťум, Хветут пиђђуна ĕнер армантан çăнăх илсе кайнине курмарăни?— терĕ Мариç, çурăм хыçне михĕ çакнă пек туса кăтартса.

Урťум Мариç мĕн çинђен ыйтнине

ӑнланҫӗ те, пуҫне тайа, тайа тытӑнкӑллӑ, асаплӑн:

— К-к-курнӑ, терӗ Урӳум. Пӗр пӳрнине кӑтартрӗ. Унтан ҫурӑм хыҫне миҗӗ ҫакнӑ пек турӗ те, Марҫисен килӗ йенелле аллине сӗлтрӗ. Вара аллине ҫӑварӗ патне илсе пырса кавленӗ пек туса кӑтартрӗ.

— Ҥам, ҥам, к-киле-е, терӗ Урӳум йулашкинҫен.

Мариҫ Урӳум каласа, туса кӑтартнинҫен ҫакна ӑнласа илҫӗ: Хветут пӗр пӑт ҫӑнӑх киле ваҫҫи тесе илсе кайнӑ пулнӑ. Хветут нийепле ҫӑнӑх та киле илсе пыман. Мариҫ ӑшҫикӗ тата хытӑрах вӑркама тытӑнҫӗ. Ӑҫта ӗҫнӗши? Кам патне ҫӑнӑха йӑтса кайнӑши? Мариҫ тепле майлӑ та шухӑшларӗ. Ҫӑнӑха Хветут кам патне ҫӗклесе кайнине пӗлмесӗрех килнелле утрӗ.

II

Хӗвел карташ йенҫи кантӑкран кӗрсен тин Хветут кӑмака ҫинҫен анҫӗ. Хышанкаларӗ*). Ҫӑварӗнҫе темӗн ҫимелли пур

*) Хыҫаланкаларӗ.

пек кавлекелесе илҭĕ. Йĕри-тавра тĕксĕмĕн пăхрĕ. Арăмĕпе аҭисем кăнтăрлахи апат çисе лараççĕ. Мариç Хветут кăмака çинҭен ансанах пĕриккĕ сиввĕн пăхса илҭĕ. Хветут çавна кура, пит çусан сĕтел хушшине лармарĕ, уçăлма пек, тула тухрĕ. Кĕлет умне, хĕвел ăшшине ларҭĕ те, пирус аврама тытăнҭĕ. Ирпаç сивĕ пулин те, кăнтăрлахи хĕвел çапах ăшă. Хветута кĕрхи хĕвел ăшши ыррăн туйăнҭĕ, ларат хĕвеле хирĕç пăхса. Хветутшăн пайан темĕнле хурлăхлă пек туйăнат хĕвел ăшшăн пăхни те, çӳлте кураксем вĕççе кайма пĕрле пухăнса, сывлăша ҭашкăртса выљани те. Хветут кăмăлĕ пĕрре те халиҭҭенхи пек мар: ĕçлес килмест, пуç ыратат, ҭĕре вырăнта мар пек. Ĕнер каç мĕн пулни Хветута ҭăрмантарат. Пирус тĕтĕмне ăша çăтса, хăвăрт ĕмсе, Хветут ĕнер каç мĕн пулнине аса илет.

Ĕнер кăнтăрла арман урапи кăшт ваннăҭҭĕ. Хветут урапана васкавлă йусама тытăнҭĕ. Хăйне пулăшма Хветут Кавĕрлене ҭĕннĕ. Пĕр виçĕ-тăватă сехет хушши Хветутпа Кавĕрле хура тара ӳксе

ĕçлерĕç те, арман каллех кĕрлесе кайрĕ. Ĕç пĕтерсен Кавĕрле Хветута:

— Ĕçер мари кăштах ывăннă çинҫен? терĕ шўтле пек, Московккинăн ерехĕ пит тутлă теççĕ.

— Ĕçĕпĕрçке, аттă ĕçер,—терĕ Хветут Кавĕрлене. Çак сăмахсене калаңă ҫухнех Хветут арăмне аса илҫĕ. Мариç вĕт ĕçме хушмасттă. Ĕçсен пит йатлаçатт. Пĕр пус укçана та шутта илсех тăратт те, нийеплĕ ĕçме те май çук. Халĕ ĕнтĕ Кавĕрлене калаңă сăмах çине тăрасах пулатт: ывăннă çинҫен, ĕçе туса пăрахңă хыççăн ĕçтересех пулатт йулташа, шухăшлатт Хветут. Анҫах ăçтан тупасха укçа? Мĕнпе ĕçтерес? Кăшт шухăша кайса тăҫĕ те Хветут, пуçне лăнк тайрĕ.

— Ара арманта çăнăх пурçке. Армашăн Кавĕрлене ĕçлеттернĕ, арманти çăнăхпа ерех ĕçтерсен пысăк усал ĕç тунийех пулмĕ, терĕ Хветут хăй ăшĕнҫе. Каллех пĕр авăка шухăша кайса тăҫĕ. Арманти çăнăха илсе кайса ерех ĕçесси Хветутшăн, пĕр шухăшласан, аван мар пек туйăнҫĕ.

— Нумай мар вĕт, пĕр пăт пек çите

пире. Арман пĕр пăт çăнăх вĕçнех йулас çукçкеха. Хаљ илем те, ӳлĕм никçан та илмĕп, терĕ Хветут хăй ăшĕнђе. Çак шухăшпа Хветут ђĕри лăпланђĕ.

— Есĕ Московккинă патне кайса лар, епĕ пырăп, терĕ Хветут Кавĕрлене. Хăй кĕреçе çăнăх хывакан кĕлете кĕђĕ те, пĕр пăт кирепе тайтарсах михĕ çине йађĕ. Урӳм çăнăха виçнине, михĕ çине йанине пăхса тăђĕ.

— Килте çăнăх пĕтнĕха, хамăнне авăртиђђен ђам, ђам тума кирлĕ, тесе суйрĕ Хветут Урӳма.

Урӳм м-м-м текелерĕ те, кĕлетрен тухса кайрĕ. Хветут михĕне хулпуççи урлă йарса çурăм çине персе хуђĕ те, йалалла утрĕ. Тĕттĕм пулса килет. Хветут хăвапа хупăрланса тăракан пĕве хĕррипе, вара çатан карта айккипе пырса Московккинă патне кĕрсе кайрĕ.

Камши вăл Московккинă?

Пĕр ик виçĕ уйăхранпа таврари йал çыннисем Московккинăна палламанни те йулмарĕç пуљ. Московккинă вăл 30—35 çулхи пĕр пĕђђен пурăнакан хĕрарăм. Хăй хитрескер: шурă, çавракан питлĕ,

пĕђĕк хĕрлĕ туталлă, çинçе те ђăмăр пӳсиллĕ. Московккинă хăй ку йалсем мар. Çуркуннерех Московккинă çак йала каткапиђке йусакан пĕр çамрăк арçынпа килнĕђђĕ. Арçынни пĕр-ик ерне ĕçлекелерĕ те, таçта кайрĕ, Московккинă çав арçынтан йулса, пĕр пушă ларакан пӳрте хваттер илсе пурăнаť. Токумĕнђĕсем тăрăх Московккинă мал йенђи ђăваш хĕрĕ, ђухăнскер. Кунта килсенех Московккинă пасарсенђе кукăљсем, сăра сутма тытăнђĕ. Хаљ ĕнтĕ Московккинă йаланах ерех тытаť. Ерехе Московккинă хăй патĕнђе те ĕçтерет, киле ваљђи илме пыракансене те сутаť. Ерех сутнă пирки пĕр-иккĕ сута та леккелерĕ çав Московккинă, штраф та хунă ун çине, çаплах Московккинă хăйĕн ĕçне пăрахмасť, вăрттăн çаплах ерех сутаť.

— Мĕнпе пурăнас манăн? тет вăл комсомолсене, йалканаш ђленĕсене, лешсем хăй патне ухтарма пырсан.

— Ĕçле ав колхосра, йе пахђа çимĕç типĕтекен савăтра, теççĕ комсомолĕссем.

— Епĕ ђирлĕ, ниçта та ĕçлеме пулта-

раймастăп. Йурĕ, малашне ерехпе аппаланмăп, куклисене пĕçерсе сутма ан ҫарăр, тесе йăлăнаҫ...

Çапла муталанкаласа пурăнаҫ Московккинă çак йалта.

Московккинă Хветут илсе пынă çăнăхшăн çур литр ерех, пĕр ҫĕпĕ автан ăшаласа пама пулҫĕ. Мĕнле калана, çапла тунă. Хветутпа Кавĕрле малтан тăварланă хăйарпа çисе ерехне кăшт ĕçрĕç. Вара автанĕ пиçсе çитсен тата ĕçрĕç, çирĕç. Çур литра ĕçсе йанă çĕре сĕтел çине тата кĕленҫесем тухса ларҫĕç, наливкă тековнисем, хĕрлĕ тĕслисем. Ĕçсе çисен Кавĕрле тухса кайрĕ, Хветут йулҫĕ. Хветут та Кавĕрлепе пĕрлех тухса кайасшăнҫĕ, анҫах Московккинă çемçе аллипе çурăмран Хветута кăшт лăпкаса, вăрттăн: ан кайха, йул, терĕ те, Хветут ўсĕрĕле пуçланăскер, Московккинă патнех ларса йулҫĕ. Кавĕрле тухса кайсан, Хветут умне таçтан çăваран шурă çăнăхран пĕçернĕ вĕтĕ кукăљсем, çупала ăшаланă шăртан, арпус, панулмисем пырса ларнă. Ĕçтерет, çитерет Московккинă Хветута, пит пахаласа хăна тăваҫ. Хăй Московккинă ҫипер-

скер, халĕ Хветутпа пĕрле наливкăсем, портвейн ĕçнипе хĕрелсе кайнă, Хветутшăн калама çук илемлĕн курăнаҫ. Пĕрер сехетрен вара Хветут таçта путса анса кайнă пек туйăнҫĕ. Хветутшăн Марисĕ те, аҫи-пӗҫийĕ те, арманти ĕçĕсем те таçта кайса çухалнă, çук пекех. Ним шухăш та çук ӳсĕрĕлсе кайнă Хветутăн. Илĕртрĕ, астарҫĕ ĕнер Московккинă Хветута хăна тума пĕлнипе те, илемлĕ пиҫĕпе те, хĕрӳллĕ ыталаса та. Пĕтĕм пурăнăç, пĕтĕм тĕнҫе тĕтре ăшне путнă Хветутшăн, пĕр Московккинă анҫах куç умĕнҫе ҫăн паха, ҫăн кăмăла тултаракан çывăх çын пек туйăннă. Хветут вăл вăхăтра Московккинăшăн арманти çăнăха мар, хăй ҫĕрине кăларса пама та хатĕр пулнă. Ĕçтеретçитерет Московккинă Хветута, ыталаҫҫуптăваҫ те, сăмах хушшине çăнăх кирли çинҫен кӳртсе хăвараҫ.

— Хветут Михалҫ, тусăм. Есĕ йаланах ман пата килкеле. Кунта килсе апат çи. Пĕçерсе парассишĕн пулсан ан шухăшла. Çăнăхĕ пулсан, епĕ саншăн кашни кунах вутă хутса хăна кăмăла кайакан апатсем пĕçерĕп. Çинçе, çемçе сассипе кайăкла

ҫӗвӗлтетет Московккинӑ. Куҫран Хветута тилӗ пек пӑхать, шӑвӑнать, аҫашланать, ҫемҫен Хветут ҫумне тӗршӗнет.

Хветутӑн пӗтӗм ӑс-пуҫ улшӑнса кайнӑ ҫав Московккинӑпа. Халӗ, пайан, ӗнтӗ урӑхла. Хветута ӗнер каҫ пулнӑ ӗҫсемшӗн халӗ намӑс. Московккинӑ патне кайнӑшӑн ӳкӗнсе ҫӗре вӑркать, хӑйне хӑй Хветутӑн йатлас килет.

— Тху, тесе сурҫӗ Хветут Московккинӑ патӗнҫи ирсӗрлӗхсене пӗтӗмпе аса илсе. Туртса пӗтерне пирус тӗпне ҫилӗпе ывӑтса йаҫӗ. Аса илҫӗ халӗ Хветут. Вӑл Московккинӑна тата виҫӗ пӑт ҫӑнӑх пама пулнӑ. Леш, хӗрлӗн куҫа илӗртекен ерехсемшӗн, тутлӑ ҫимӗсемшӗн, хӗрӳллӗ ыталушӑн... Анҫах Московккинӑна каланӑ ҫӑнӑха мӗнле парас-ха? Ӑҫтан тупас ҫӑнӑх? Текех армантан илсен, мӗн пулҫӗ вара? Килтен илсе кайса парас—арӑм куҫа ҫавса илӗ...

— Енерхишӗн пӗр пӗрҫӗ ҫӑнӑх та памастӑп епӗ Московккинӑна. Кайса каламха памастӑп тесе, йатлам ӗнерхишӗн,— терӗ йулашкинҫен Хветут. Тӑҫӗ те, Московккинӑ патнелле утрӗ.

Мариç упăшкине апат çиме ҫĕнес тесе тухрĕ—упăшки çук.

— Ăçта кайнăши?—Армана кайнă пуљ, тесе Мариç тиркĕ-ҫашкă пуçтарма, килти ытти ĕçсене тума тытăнҫĕ.Каç та пулҫĕ, Хветут çаплах çук. Каçхи апат çийес умĕн Мариç армана васкаса утрĕ. Ирхине те, кăнтăрла та Хветут апат çимен, каçхине те пулин çитĕр тесе Мариç сĕтлĕ пăтă пĕçерҫĕ. Çитрĕ Мариç армана. Хветута шыраса арман кĕлетне, карташне пăхкаларĕ. Урŏум ĕçпе ыйăннăскер, кĕлет умĕнҫе канса ларат. Мариç унган Хветут çинҫен ыйтрĕ. Хветут ĕнер каçранпа армана килсе кĕмен иккен.

—Ăçта кайнăши вăл? терĕ Мариç. Урŏум аллине çăварĕ патне илсе пырса, ерех ҫеркине çăвара ўпĕнтрнĕ пек турĕ те, Московккинă хваттерĕ йенелле кăтартрĕ.

— Ай! Московккинă патĕнҫе! Мариç ҫĕри татăлса анас пекех пулҫĕ. Московккинă патне çын пĕрре вĕренсен кайатех теççĕ. Укçа таврашне Московккинă арçынсенҫен илĕртсе илме пит ăста теççĕ. Пахҫа çимĕç типĕтекен савăтра ĕç-лекен çамрăк арçынсем ҫылайĕшĕ Мос-

ковккинăпа çыхланса, йаланах ўсĕр çўресе, ĕçе йурăхсăр çынсем пулса тăҕĕç. Хветута Московккинă патне кайнине пĕлсен, Мариç пит хăраса ўкрĕ. Хветута Московккинă илĕртсе, хăй майлă çаврăнса, савăтри хăш пĕр çынсем йурăхсăра тухнă пек пуласран хăраса Мариçĕн пĕтĕм çан-çурăм çўçенсе, çўç-пуç вĕрилле тăрса кайрĕ.

— Тулăхлă çын çав Хветут Московккинăшăн... Хветут аллинҕе çăнăх нумай, çавăншăн илĕртет ĕнтĕ, тесе тавçарса илҕĕ Мариç. Тата хытăрах вăркаť Мариç ҕĕри. Московккинă патнелле васкаса утнă çемĕн Мариçĕн ҕĕри тухса ўкес пекех хытă тапма тытăнҕĕ. Талкăшса çитрĕ Московккинă хваттерĕ патне. Пăхаť— урам йенне тухакан кантăксене шурăпа карнă. Пўрте кĕме пыҕĕ, алăкне питĕрнĕ. Шаккарĕ Мариç, хыттăн, хайаррăн шаккарĕ. Алăк уçăлҕĕ. Мариç пўртне кĕрсен тĕлĕнсе кайса ҕутах йăванса кайаťҕĕ. Сĕтел хушшинҕе Хветут сĕлехе йухтарса лараť, пуçне ҕикнĕ, мăйне пăрнă.

— Есĕ кунтаи?! терĕ Мариç йĕрсе йарас çинҕе тăракан сассипе, хайаррăн.

— Кунта, терĕ Хветут, ыйăхран вăраннă пек пулса. Мариç çине шăтарас пек пăхса илҫĕ те, питне-куçне ҫалăштарса пăрахса ухмаха йернĕ çын пек ахăлтатса кулса йаҫĕ. Унҫҫен те пулмин тăҫĕ те, тайкаланса, вăрăмăн утăмласа, пӳртрен тухса кайрĕ.

Московккинă кăмака умĕнҫе сăмавар лартса тăрат̆

— Мĕншĕн ĕçтеретĕн, мĕншĕн илĕртетĕн çын упăшкине? Армантан çăнăх вăрлаттарса пурăнас тетĕни?! Ĕçтерсе ĕçлекен çынна йурăхсăра кăларас тетĕни?— терĕ Мариç Московккинă патне çилĕллĕ питкуçпа, йывăррăн сывласа пырса тăрса. Московккинă Мариçе шăлне çыртса, хайарланса хăй патне пынине курсан, кутăн кутăн ҫакрĕ те, çинçе, ҫанкăлкка сассипе: епĕ вĕсене ҫĕнмен, вĕсем хăйсем килҫĕç. Çынна килсен мĕнле хăна тумасăр кăларса йаран пулĕ, терĕ.

— Астусарах пурăн! Çăнăхшăн пулсан, ан ҫăрман, ĕç тухмĕ! терĕ Мариç çаплипех çилĕпе. Московккинă патĕнҫен палт пăрăнҫĕ те, тутисене шăт тытса, шăлне çыртса сĕтел патне пыҫĕ. Сĕтел çинҫе

ерех кĕленҫисем, аш кукли таткисем, хышласа пĕтернĕ ҫăх шăмми, тирки-ҫашки йĕркесĕр лараҫҫĕ.

— Вăт сана! терĕ Мариҫ, пĕтĕм сĕтел ҫинҫи йапалсене шакăр ҫĕрелле сăтăрҫĕ.

— Ай! терĕ Московккинă, хăлхана ҫурса пăрахас пек сасăпа.

Мариҫ Московккинă ҫине ҫаврăнса пăхмасăр пӳртрен хыттăн пусса тухса кайрĕ.

III

— Мĕн тăвас? Мĕнле ҫарас Хветута ĕҫме? Ĕнтĕ ĕҫме тытăнҫĕ, пĕрик ернесĕр, йе уйăхсăр ҫарăнас ҫук. Мĕн ҫухлĕ сийен туса хурĕ колхоса? Халех, пайанах калас марши колхос правленине Хветут ĕҫме пуҫланине, ҫăнăх армантан илсе кайнине? Каласан та Хветута шел. Каламасан та арманти ҫăнăха ҫĕклени, текех ĕҫсе ӳсĕрĕлсе арманти ĕҫе йапăха йани калама ҫук хăрушла айăп пулаҭҫке. Ҫийĕнҫех колхос правленине Хветут ҫинҫен пĕлтерсе халех ҫак пуҫланса кайнă усал ирсĕрлĕхе пĕтерсе хумалла пулĕ.

Темиҫе тĕрлĕ те шухăшларĕ Мариҫ. Ҫĕр каҫах пĕр ҫывăрса кайаймасăр шу-

хăшласа выртрĕ. Хветут, ӳсĕрскер, вилнĕ пек çывăрать. Аҫасем те виççĕшĕ те çывраççĕ. Пĕр Мариç кăна, ăшне çунтарса, ҫĕрĕм ыйхă тумасть...

Хветут ирхине вăрансан тăҫĕ те, апатмĕн çимесĕрех, арăмне, аҫисене çиленнĕ пек, пĕр сăмах ҫĕнмесĕр паҫ тухса кайрĕ.

Мариç аслă ывăл аҫине, 13 çулхи Ларивана, армана ҫуптарҫĕ:

— Кайса пăхха аҫам, аçу арманта ĕçлеме тытăнҫĕши?

Аҫа ҫупрĕ. Мариç ирхи апат хатĕрлесе хуҫĕ. Пĕр çур сехетрен аҫа пĕҫҫенех армантан килҫĕ те, амăшне:

— Анне, атте арманта çук. Пайан, ҫулсене шаккаса йусамалла, ҫулсем йурăхсăр, аттене Уртум кĕтет, терĕ Лариван.

Мариç хăвăртрах ҫупрĕ Московккина патне. Каллех кантăксене шурăпа карнă, каллех алăка питĕрнĕ. Мариç алăка тӳнлеттерсе шаккаса кĕҫĕ—Хветут каллех кунта ларать, ӳсĕрĕлме те ĕлкĕрнĕ.

— Йурăхсăр ĕçе çинҫех, халех пĕтерсе хурас. Пĕр сехетлĕх те Хветута армана

йама йурамаст̆ ĕнтĕ. Колхос правленине Хветутăн ирсĕр ĕçĕсем çинђен пĕлтересех пулат̆, терĕ хăйне хăй Мариç.

Пыђĕ те Хветута çавăтса, танкăлтаттарса, пӳртрен кăларса йађĕ.

— Кай киле! Епĕ колхос правленине есĕ армантан çăнăх Московккинă патне илсе кайнине, ĕçме тытăннине кайса калатăп, терĕ Мариç Хветута çухăрмасăр, анђах хыттăн, çилĕпе. Хура куçĕсемпе Хветута сиввĕн пăхса илђĕ те, карташĕнђен урамалла тухса кайрĕ. Хветут пĕр çĕртре тайкаланса тăђĕ-тăђĕ те, киле кайас вырăнне каллех, Московккинă патне кĕрсе кайрĕ.

Мариç колхос правленине пырса кĕрсенех йĕри таврa пăхкаласа илђĕ. Унтан правлени пуçлăхĕ патне пырса, хуйхăллăн:

— Хветут ĕçме тытăннăçке пирĕн, Московккинă патне армантан çăнăх илсе кайнă терĕ те, йĕре-йĕре, куççулĕпе сапăна-сапăна Хветут мĕнле ĕçме пуçласа кайни çинђен йĕркеллĕ каласа пађĕ. Вара вăрăммăн сывласа илђĕ те, хуйхă пуснипе хуллен килнелле тухса утрĕ.

Çав кунах колхос правлени армана тĕрĕслеме комиççи йаҕĕ. Тĕрĕслесе тухнă хыççăн, комиççи пĕр пăт çăнăх тухмасть тесе, актă çырҕĕ. Каçхине колхос правленийĕ колхоçнĕксене пухха пухрĕ. Пухха Хветута икĕ çамрăк арçын Московккинă патĕнҕен вăйпах илсе пыҕĕç. Хветут пайан ӳсĕрех мар, анҕах пит шурса илемсĕрленсе кайнă. Пиҕĕ-куçĕ тăртанса тăраť, куçĕсем какай пек хĕрлĕ, алли-ури ҕĕтрет. Çамки çине тухнă мухмăр тарне тĕрексĕр аллипе шăла-шăла илет. Пуху Хветут ĕçĕ пирки ҕăн малтанах Хветута хăйне сăмах паҕĕ.

— Йулташсем! терĕ Хветут, сĕтел умнелле тухса, айăплă сасăпа, хуллен. Пĕр сăмах каларĕ те, йĕри-тавра ларакан колхоçнĕксем çине пăхса илҕĕ. Пуху шăп. Йĕри тавра Хветута йулташсем, колхос утарнĕкĕсем, куç илмесĕр пăхса лараççĕ. Пуху шăп...

— Йулташсем, терĕ Хветут, кăшт хăйуллăрах, хытăрах. Епĕ халиҕҕен, çак армана кĕнĕренпе, хăвăр та пĕлетĕр, пĕр пĕрҕĕ çăнăх та вăрламан. Хаљ кăна вăт, пĕр пăт çăнăх илсе тухрăм, каçарăр.

— Колхос пурлăхне салатакана kaça-ру çук! —терĕ пĕр хĕрарăм сасси. Темиçе куç çав сасă илтĕннĕ çĕрелле çаварăнса пăхрĕç. Темиçе куç Мариç шапшурă пулса кайса, упăшкине айăпласа каланине курҌĕç, илтрĕç. Мариç сасси çивĕҌ çĕçĕпе каснă пекех пулҌĕ.

Ҍылайҍҍен пуху Хветут ĕçĕ пирки шавларĕ, кĕрлерĕ. Хăшĕ-пĕри Хветута халиҍҍен аван, тĕрĕс ĕçленĕшĕн ку айăпа kaçарас теççĕ—нумай мар вĕт вăл пĕр пăт çăнăх. Хăшĕ-пĕри çирĕп айăплас теççĕ. Йулашкинҍен çапла йышăнҍĕç:

Хветута арман саветушҍинҍен кăларас, колхос пурлăхне салатма тытăннăшăн сута парас, терĕç. Пуринҍен ытла Хветута айăплас пирки хĕрарăмсем çине тăҍĕç. Мариçпе пĕрле йунашар тăраканнисем, Мариçăн туслă хĕрарăмсем—активлă телекаткăсем. Мариç те вĕсемпе пĕр çăварлă пулса упăшкине айăпласшăн çине тăҍĕ.

— Пайанах Московккинă çинҍен те сӳтсе йавар! терĕ Хветут çинҍен сăмах татăлсан, Мариç.

— Московккинă сийенлĕ хĕрарăм!

— Московккинӑ пирӗн упӑшкасене, ывӑлсене илӗртсе, ӗҫтерсе ӳсӗртсе пурӑнать.

— Пирӗн ҫӑн аван ӗҫлекен ҫынсене пӑсать!

— Ан пултӑр колхосра ӗҫесси, тасатар Московккинӑна хамӑр ҫывӑхран.

— Кӗрлесе, тапранса кайрӗҫ хӗрарӑмсем. Пӗрин хыҫҫӑн пӗри ҫак сӑмахсене кала кала йараҫҫӗ.

Пухура Московккинӑ пирки ҫапла йышӑнҫӗҫ:

Хӗрарӑмсем каланине, Московккинӑ ҫӑн та ерехпе сутӑ туса, колхоҫнӗксене хӑй патне илӗртнине шута илсе, Московккинӑна йалтан кӑларса йарасҫӗ тесе, пайанах ун ҫинҫен йалканашне пӗлтерес, терӗҫ.

Тепӗр кун колхоҫнӗтсӑсем, авӑн ҫапма тухнӑскерсем, милитси Московккинӑна района илсе кайнине курҫӗҫ. Московккинӑ тутӑрпа темӗн йапаласем ҫыхнӑ, милитси хыҫҫӑн хуллен ҫулпала утса пырать Каҫхине Московккинӑ патӗнҫе ухтару туна та, токументсем тупнӑ Ҫӗнӗрен тупӑннӑ токументсем тӑрӑх Московк-

кинă лишенккă, раскулаҫҫит тунă ҫын арăмĕ пулнă.

— Тасалтăр акăш-макăш, хăйаматран килнĕскер, кайтăр ҫăва патнелле терĕ пĕр колхоҫнĕтсă, Московккинă йенелле кă-тартса.

— Тухăҫлă ҫын тупрăм терĕ пуҫ Хветута ҫыпҫăнса та... анҫах ĕҫ тухмарĕ, терĕ Мариҫ, ĕҫленĕ хушăран Московккинă йенелле пăхса.

Мариҫăн суранланнă ҫĕри ыратать...
Хĕрхенет Мариҫ Хветута ҫак пуҫсăр Московккинă аллине лексе, хăйне хăй колхоҫнĕксем умĕнҫе шанҫăксăра тухнăшăн.

— Ах, шелҫке, шел мăнтарăн ҫыннине.
Вĕҫĕмсĕр сурать Мариҫăн суранланнă ҫĕри...

---

Редактор Н. Васянка. Техред. А. Демидов
Корректуру держал Н. Андреев
Поступило в производство 9/X—32 г.
Подписано к печати 22/III—33 г.
Уп Чувашлита № 1538. Заказ № 1729. Тираж 5100 экз.

Ст. ф. б. 62×94: Об'ем 1 п. л. 54000 п. з. в п. л.

ХАКĔ ЦЕНА 25 ПУС КОП

М. Трупина

# СОРВАЛОСЬ

Чувашиздат

1933

Чебоксары